Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

40 (8607) № ✻ Шăматкун, çĕртме (июнь) уйăхĕн 2-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Районта

Çу кунĕсем инкексĕр иртчĕр

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ А. Матросов чрезвычайлă лару-тăрусенчен сыхланас, асăрхаттарас, пушар хăрушсăрлăхĕпе, шыв-шурти хăрушсăрлăхпа тивĕçтерес ĕнĕпе ĕçлекен районти комиссин черетлĕ ларăвне ирттернĕ. Пушар хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕ çинче ятарлă программăсен пайĕн ертӳçи Г. Любимов чарăннă. Вăл палăртнă тăрăх, шыва кĕрес тапхăра хатĕрленес тĕлĕшпе халăхпа ăнлантару ĕçĕсем ирттереççĕ, шыва кĕме юраман вырăнсенче асăрхаттару паллисем лартаççĕ. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен умĕнче пĕвесене водолазсене чĕнсе тĕрĕслеттерес пысăк ĕç тăрать. Ларура вут-кăварпа шыв-шур хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерессипе йышăнусем тунă.

Яшсем – вĕренӳ сборĕнче

Районти 10-мĕш класра вĕренекенсен Çатракасси шкулĕнче вĕренӳ сборĕ иртрĕ, 68 яш çар ĕçĕпе паллашрĕ. Стройпа утассине, вăй виçессине, тĕл пересси-не тата ытти хăнăхава яшсем шкулта теори тĕлĕшпе вĕреннĕ пулсан, халĕ вара вĕсем кашни кун çивĕч кĕрешӳре пулчĕç. Вĕсен чăн-чăн салтак тапхăрĕ иртрĕ.

Пулас салтаксене район администрацийĕн вĕренӳ пайĕн ертӳçи З. Дипломатова, Муркашпа Элĕк районĕсен çар комиссарĕ В. Казаков саламланă, вĕренӳ ĕçĕ епле пынипе паллашнă. В. Казаков палăртнă тăрăх, районта çулсеренех çар вĕренӳ заведенийĕсенче пĕлӳ илекенсем, салтака каякансем йышланса пыраççĕ.

16 çемьене – 1-мĕш ача пособийĕ

Социаллă хӳтлĕх пайне çулталăк пуçланнăранпа пĕрремĕш ача çуралнăшăн (усрава илнĕшĕн) уйăхсерен паракан пособие илме 16 çемье заявлени çырнă, вăл шутран 14-шне 417,42 пин тенкĕ тӳлев тунă. Кăçалхи уйăхсеренхи пособи калăпăшĕ 8910 тенкĕпе танлашать. 2018 çулта пĕрремĕш ача çуралнă çемьесен МФЦ-на е социаллă хӳтлĕх пайне кайса заявлени çырмалла, çемье членĕсен 12 уйăхри тупăшне, социаллă пособи, компенсаци, стипенди, алимент тата ыттин калăпăшне палăртмалла.

27 çемье усă курнă

Социаллă хӳтлĕх пайĕ республикăри çемье капиталĕпе усă курас тĕлĕшпе заявленисене малалла йышăнать. Çак укçа-тенкĕпе ача виçĕ çула çитсен усă курма май пур. 100 пин тенкĕпе пурăнмалли çурт-йĕр условине лайăхлатма, пĕлӳ илессинче усă курма, инвалид ачана пулăшассинче тĕрлĕ ĕç пурнăçлама пулать.

Çулталăк пуçланнăранпа республикăри çемье капиталĕпе 27 çемье усă курма пултарнă, вăл шутран 17-шĕ пурăнмалли çурт-йĕр условине лайăхлатнă, 10-шĕ ачана вĕрентме усă курнă.

2018 çулта республикăра çемье капиталне тӳлеме 196,800 пин тенкĕ уйăрма палăртнă.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Районта

Хăюлăхĕпе паттăрлăхĕ яланах асра пулĕ

Ĕнерхи кун, июнĕн 1-мĕшĕ, Муркаш районĕн историне паллă кун пулса çырăнса юлчĕ: Муркаш районĕнчи шалти ĕçсен пайĕн служба вăхăтĕнче пуç хунă сотрудникĕсен ячĕпе Муркашра палăк уçрĕç.

Çак ятпа ирттернĕ митинга Чăваш Республикин шалти ĕçсен министрĕ Сергей Неяскин полици генерал-майорĕ, Шалти ĕçсен министерствин ветерансен канашне ертсе пыракан М. Киселев милицин отставкăри генерал-майорĕ килсе çитрĕç.

В. Степанов ертсе пыракан районти шалти ĕçсен пайĕн полицейскийĕсемпе пĕрле митинга район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, право сыхлав органĕсен районти представителĕсем, шалти ĕçсен пайĕн ветеранĕсем, общество канашĕн членĕсем, кадетсем тата вырăнти халăх хутшăнчĕç.

«Çак палăка туса лартни – служба вăхăтĕнче пуç хунă сотрудниксене чыс туни кăна мар, вĕсен çемйисене, ашшĕ-амăшне сума суни те. Çитĕнекен ăрăва та, ĕçтешсене те çак палăк яланах ĕçе парăннă сотрудниксен хăюлăхĕ, паттăрлăхĕ, çирĕп кăмăлĕ çинчен аса илтерсе тăрĕ», – палăртрĕ митинга уçнă май Сергей Неяскин. Çак палăка тума шухăшланă пуçаруçăсене, ветерансене, тав сăмахĕ каларĕ.

(Вĕçĕ 6 стр.)

Сăн ӳкерчĕкре: варринче – С. Неяскин министр, М. Киселев тата М. Григорьевская палăка уçнă хыççăн.

Çут çанталăк

Пысăк сиен кӳмен

Майăн 30-мĕшĕнче Чăваш Енре циклон алхасрĕ. Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Енри управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, вăйлă çилпе аслатиллĕ çумăр Шупашкар, Канаш, Çĕмĕрле тата Çĕнĕ Шупашкар хулисенче, Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне, Муркаш, Пăрачкав, Тăвай, Красноармейски, Шупашкар районĕсенче иртнĕ.

Çак муниципалитетсенче электропередача линийĕсем татăлнă тата йывăçсем ӳкнĕ. Ытти хăш-пĕр районта та çутă сӳннĕ. Пăтăрмахсене пĕтерес тĕллевпе республикипе чылай çын тата техника ĕçленĕ.

Муркаш район администрацийĕн ятарлă программăсен пайĕн пуçлăхĕ Геннадий Любимов пĕлтернĕ тăрăх, Муркаш районĕнче те çил-тăвăла пула пурĕ 18 ялта çынсем вăхăтлăх электричествăсăр тăрса юлнă. Электропередача линийĕсене юсассипе специалистсен виçĕ бригади 23.30 сехетчен ĕçленĕ. Шăпах çав вăхăта ялсене электричество çитмелле тунă.

Сăмах май, Хурăнкасси ялĕнчи И. Яковлев кĕçнерникун редакцие ирех шăнкăравларĕ. Электричествăна кĕске вăхăтрах килсене çитмелле тунăшăн специалистсене тав сăмахĕ калама ыйтрĕ.

Кунсăр пуçне кассăн-кассăн питĕ вăйлă вĕрекен çил районта темиçе йывăç хуçнă, хăш-пĕр кил хуçалăхĕнче хуралтă çивиттийĕсене вистени те пулнă (пурлăха страхланă кил хуçисен ку тĕлĕшпе страхлав организацийĕпе çыхăнмалла).

Вăйлă çил пирĕн районти социаллă объектсене сиен кӳмен. Çынсен сывлăхне сиен кӳни те пулман.

Н. НИКОЛАЕВА.

Салам

ХАКЛĂ ТУССЕМ, ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Сире Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Ачасем – çемьен тĕп пуянлăхĕ! Вĕсем пирĕн пурнăçа уйрăм пĕлтерĕш кӳреççĕ, малашлăха шанчăк парнелеççĕ.

Телейлĕ те ырă ачалăхран лайăхраххи урăх нимĕн те çук. Çитĕнекен ăрушăн тăрăшасси, ăна пулăшса пырасси тата хӳтĕлесси – ашшĕ-амăшĕн кăна мар, çавăн пекех обществăпа патшалăхăн тĕллевĕ те.

Çемье институтне çирĕплетесси, амăшлăхпа ачалăха сыхласси, ачасен пултарулăхĕпе уйрăм ăсталăхне аталантарасси, çавăн пекех ӳт-пӳ тата кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен сывă ăру, лайăх пĕлӳллĕ, хастар чунлă, Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн тăрăшма ĕмĕтленекен граждансене пăхса çитĕнтересси Чăваш Ен социаллă политикин тĕп çул-йĕрĕсем пулса тăраççĕ.

Республикăра çĕнĕ ача сачĕсемпе шкулсем çĕкленсе хута каяççĕ, инновациллĕ пултарулăх центрĕсем уçăлаççĕ, физкультурăпа тата спортпа туслашма пулăшакан инфратытăм çĕнелет, професси пĕлĕвĕпе хушма професси пĕлĕве паракан тытăм лайăхланать – çакă пурте ачасене тĕрлĕ енлĕн аталантарма кирлĕ паха майсем йĕркелет.

Çапах та, паллă ĕнтĕ, нимĕнле социаллă институт та çемье, ашшĕ-амăшĕн тăрăшулăхĕпе юратăвне, чи çывăх та хаклă çынсен чун-чĕрин ăшшине улăштарма пултараймасть.

Хисеплĕ ашшĕ-амăшĕ, аслашшĕ-асламăшĕ тата кукашшĕ-кукамăшĕ! Хăвăр ачăрсемпе мăнукăрсемшĕн чун ăшшине ан шеллĕр, вĕсене юратăр тата яланах пулăшма тăрăшăр! Кашни килтех ачасен хаваслă сасси илемлĕн янăратăр!

Пĕтĕм ачана çирĕп сывлăхпа пысăк ырлăх, пурнăçра çитĕнӳсем, тăнăçлăхпа мĕнпур лайăххине тата килĕшӳлĕх сунатăп!

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ
М. ИГНАТЬЕВ.

Çырăнтару – 2018

Аталанма никĕс пур

Çу уйăхĕн 25-мĕшĕнче Санкт-Петербургра Пĕтĕм тĕнчери экономика форумĕ иртнĕ. «Унта 143 çĕршыв представителĕ, пĕтĕмпе 17 пин ытла çын хутшăнчĕ. Форум – тĕл пулса тĕрлĕ ыйтăва сӳтсе явмалли питĕ лайăх площадка», – çапла хаклана ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев асăннă форума.

Чăваш Ене пырса тивекен ĕçсем шутĕнче – республика Внешэкономбанкпа тата Стратеги пуçарăвĕсен агентствипе алă пуснă килĕшӳсем. Михаил Игнатьев «çак документсем республикăра предпринимательсен пĕрлĕхĕ валли лайăхрах условисем йĕркелеме пулăшасси» пирки иккĕленмест.

Хăй форумра сӳтсе явма хутшăннă тĕп темăсен шутĕнче Михаил Игнатьев экспорта вăй парассине палăртнă. Чăваш Енĕн иртнĕ çулхи экспорт калăпăшĕ 495 миллион долларпа танлашнă. Сахал мар, анчах çакăнпа çырлахма юрамасть, хамăрăн продукцие тĕнче шайĕнчи рыноксене кăларассипе малашне те тимлемелле.

Çырăнтару – 2018

Июльтен илсе тăма

«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июль уйăхĕнчен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.

Хаçата почта уйрăмĕсенче ултă уйăха çырăнмалли хак – 434 тенкĕ те 22 пус.

Салам

ХАКЛĂ АЧАСЕМ, АШШĔ-АМĂШĔСЕМ ТАТА ВОСПИТАТЕЛЬСЕМПЕ ВĔРЕНТЕКЕНСЕМ!

Сире Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр.

Ачалăх – кашни çыншăн чи телейлĕ тапхăр. Ачалăх телейлĕ килесси вара çемьерен, пирĕнтен, ашшĕ-амăшĕсенчен, нумай килет. Ача чухне эпир пурнăçăн кашни саманчĕпе савăнатпăр, малашнехи пирки ĕмĕтленетпĕр. Çакна асра тытса, пирĕн паян хамăр ачасен ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕччĕр тесе, вĕсен ачалăхĕ телейлĕ пултăр тесе хамăртан килнине йăлт тумалла: вĕсене юратса, тĕрĕс воспитани парса ӳстермелле. Хамăр ачасене пурнăçра хăйсен вырăнне тупма пулăшмалла. Çапла пултăр тесе вĕсен пултарулăхне курса малалла аталантарма тăрăшмалла.

Ачасем! Яланах тăрăшуллă пулăр, ĕмĕтĕрсем патне малтан мала ăнтăлăр, хăвăр пултарулăхпа савăнтарăр, çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвăр.

Пурне те сире çирĕп сывлăх, телейлĕ те вăрăм кун-çул сунатпăр.

Район пуçлăхĕ – депутатсен район Пухăвĕн председателĕ
И. НИКОЛАЕВ.
Район администрацийĕн пуçлăхĕ
Р. ТИМОФЕЕВ.

Саламлатпăр

Орининти вăтам шкул коллективĕ çак шкулта нумай çул химипе биологи вĕрентекен тата директорăн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен çумне, хаклă ĕçтеше – **Ирина Григорьевна ГРИГОРЬЕВĂНА**

илемлĕ юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлать. Юман пек çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, вăрăм кун-çул, телей сунать. Хăйĕн пĕтĕм пурнăçне вăл ачасене вĕрентсе воспитани парас ĕçе халлланă. Ирина Григорьевна учительсемпе ачасен ашшĕ-амăшĕсем хушшинче те пысăк хисепре. Вăл ĕçре тăрăшулăхпа, явăплăхпа, ĕçтешсемпе пĕр чĕлхе тупма пĕлнипе, пысăк ăсталăхпа та тавçăрулăхпа палăрса тăрать. Малашне те ăна эпир çак пархатарлă ĕçре çитĕнӳсем сунатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçланса пыччăр. Çемьере яланах килĕшӳ, ăнлану, юрату хуçаланччăр.

Саламла: пĕрле ĕçлекенсем.

Пирĕн хисеплĕ çыннăмăра, ăшă кăмăллă аннене, юратнă асаннене, шанчăклă тăвана – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Татьяна Степановна ЗАМЯТИНĂНА** 85 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çак ятпа мĕнпур ыррине кăна сунатпăр. Мĕн шутланисем пурнăçланса пыччăр, чир-чĕр санран аяккалла пăрăнтăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн Турра тав тăватпăр.

Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем çемйисемпе, 14 кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем, хăти-тăхлачисем.

Вулакан пултарулăхĕ

Шухăш

Сакăрвун пиллĕк çулта та
Каяс килет вăрмана,
Татас килет кăмпине,
Çиес килет çырлине.
Анас килет улăхне,
Çулас килет курăкне,
Çави çивĕч каснăран,
Утти хулăн пулнăран.
Пуçтаратăп уттине,
Çилпе типсе çитнине.
Ĕçлес шухăш пит нумай,
Анчах сахалланчĕ вăй.
Анчах куккук лаç çинчеччĕ,
Ăçта вĕçсе кайрĕ-ши?
Çамрăк чухнехи вăй-халĕ
Ăçта кайса кĕчĕ-ши?
Аванмасăр, вăй хумасăр
Симĕс курăк çулăнмасть.
Ĕçлемесĕр, тимлемесĕр
Ырă пурнăç пулаймасть.

Т. ЗАМЯТИНА.

Кашмаш ялĕ.

Комисси ларăвĕнчен

Парăм тӳлевпе илемлĕ

Майăн 30-мĕшĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи ĕç укçине вăхăтра тата туллин тӳлессин, официаллă ĕçлеменнине чакарассин ыйтăвĕсемпе ĕçлекен ведомствăсем хушшинчи комиссин черетлĕ ларăвĕ иртрĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, экономика, АПК аталанăвĕпе муниципалитет харпăрлăхĕн управленийĕн ертӳçи Андрей Миронов ертсе пычĕ.

Комисси ĕçне райадминистрацин, суд приставĕсен районти пайĕн, налук инспекцийĕн, ĕçпе тивĕçтерекен центрăн, социаллă страховани фончĕн специалисчĕсем тата ытти явăплă ĕçчен хутшăнчĕ.

Чи малтанах иртнĕ çулта тата кăçалхи пĕрремĕш кварталта вырăнти бюджета килмелли налук парăмĕсене шыраса илессипе суд йышăнăвĕсене пурнăçлани çинче суд приставĕсен районти пайĕн аслă суд приставĕ Александр Ильин чарăнчĕ. Вăл пысăк парăмлисене уйрăммăн асăнчĕ. Хăш-пĕр организацире ĕç-хĕл питех те йывăррине палăртрĕ.

Район администрацийĕн финанс пайĕн ертӳçи Рената Ананьева вырăнти бюджета килекен налуксене тӳлессипе лару-тăру йывăррине палăртрĕ. Вăл каланă тăрăх, кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа уйрăм çынсенчен пухакан çĕр тата пурлăх налукĕсен парăмĕ 30 процент чухлĕ ӳснĕ, вырăнти бюджета килекен тӳлев 14 процент чухлĕ чакнă. Рената Иосифовна налук парăмĕсене шыраса илессипе çине тăрса ĕçлеме сĕнчĕ, ку тĕлĕшпе хистев ĕçĕ те вырăнлă пуласси иккĕлентермест. Çавăн пекех вăл ăнлантару ĕçне вăйлатма, парăма шыраса илессипе ытти çул-йĕре те тишкерме, вырăнти бюджета тултарассипе май пур таран çивĕч ĕçлеме сĕнчĕ.

Район администрацийĕн экономика пайĕ маларах уйрăм предпринимательсен, хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ĕç-хĕлне тишкернĕ. Пилĕк хресчен (фермер) хуçалăхĕнче иккĕленӳллĕ самантсем пуррине тупса палăртнă. Иртнĕ комисси ларăвĕнче вĕсене черетлĕ ларăва чĕнме йышăннăччĕ, çавна май лару-тăрăвне уçăмлатма, ĕç-хĕлне тишкерме сĕннĕччĕ.

Комисси И. Скворцов тата А. Тепеев хресчен (фермер) хуçалăхĕсенчи лару-тăрупа паллашрĕ. Икĕ хуçалăхăн та ака-суха лаптăкĕ пĕчĕк мар. Ертӳçĕсем малашне те тухăçлă та тупăшлă тата саккун шайĕнче кăна ĕçлес, тӳлевсене вăхăтра татас, парăмсемсĕр ĕçлес шухăшлă.

Кун йĕркинчи черетлĕ ыйту социаллă найм килĕшĕвĕсем пирки пулчĕ. Вĕсен парăмĕ те пĕчĕк мар. Ку тĕлĕшри лару-тăрупа район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ Екатерина Прокопьева паллаштарчĕ. Вăл палăртнă тăрăх, муниципалитет пурлăхĕнчи пурăнмалли çурт-йĕр фондĕнче 158 пурăнмалли лаптăк 6402,2 тăваткал метрпа танлашать.

Иртнĕ çул асăннă пай парăмçăсем патне 254084 тенкĕлĕх 52 претензи çырăвĕ янă. Кăçалхи çул пуçламăшĕнче 21 наниматель 30644 тенкĕ парăма хăйĕн ирĕкĕпе татнă. Асăннă пай социаллă найм килĕшĕвне тăвассипе 26 асăрхаттару çырнă.

«УК ЖКХ» чикĕллĕ явăплăхлă общество претензипе иск ĕçĕсемпе тимлет. Организаци иртнĕ çул 30340 тенкĕлĕх 6 иск требованийĕ тăратнă. Суд приставĕсен службине 49322 тенкĕлĕх 8 ĕç тăратнă.

Ларура район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕ Алина Семенова арендăри çĕр лаптăкĕсемшĕн тата пурлăхшăн район тата ял тăрăхĕсен бюджечĕсене аренда тӳлевĕн парăмĕсене чакарассипе епле ĕçленипе паллаштарчĕ.

Çак тапхăр тĕлне район администрацийĕ 8 550 гектар çĕр тĕлĕшпе 1740 аренда килĕшĕвĕ, 10 организацип 241,68 тăваткал метрăн муниципалитет пурлăхĕн арендин килĕшĕвне тунă. Çак килĕшӳсем тăрăх çĕр лаптăкĕсен çулталăкри аренда тӳлевĕ – 7 миллион та 429 пин тенкĕ, муниципалитет пурлăхĕн аренда тӳлевĕ 346 946 тенкĕ те 89 пуспа танлашать.

Майăн 30-мĕшĕ тĕлне арендаторсем район администрацине çĕршĕн тата пурлăхшăн тӳлессин парăмĕ 2 миллион та 963 пин тенкĕпе танлашнă. Вăл шутра çĕр аренди – 2 миллион та 914 пин тенкĕ, муниципалитет пурлăхĕшĕн – 49 пин тенкĕ.

Парăмсене шыраса илессипе парăмçăсем патне çулталăк пуçланнăранпа 3 миллион та 271 пин тенкĕлĕх 79 претензи çырăвĕ ярса панă. Çапла майпа 43 парăмçăран 729 пин тенкĕ шыраса илнĕ.

Çак вăхăт тĕлне Муркаш район судне 7 иск заявленийĕ 1 миллион та 540 пин тенкĕлĕх, 467 пин тенкĕ пени шыраса илме иск заявленийĕ тăратнă. Ĕç пуçланнă май 4 арендатор парăма хăйĕн ирĕкĕпе татнă, çавна май вĕсен тĕлĕшпе çырнă иск заявленийĕсене каялла илме тивнĕ. Чăваш Республикин Арбитраж судне 3 иск заявленийĕ тăратнă.

Пай пуçлăхĕ Алина Семенова каланă тăрăх, уйрăмах пысăк парăмлисен шутĕнче çаксем: «СК Виком» ООО, «Дорисс-Нефтепродукт» ООО, «Агрофирма «Путь Ильича» ООО, А. Козлов, Ю. Хусаинова, В. Иванов, М. Зайцев, С. Юхтанов, Т. Петрова предпринимательсем.

Ларăва пĕтĕмлетнĕ май, Андрей Миронов кашни парăмçăпа уйрăммăн тата вăхăта сая ямасăр ĕçлемеллине, çирĕп йĕрке пулмаллине палăртрĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

«Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă çул-йĕр»

Кунта такăр çул пулать

Çак эрнере «Тойкилтĕ – Кĕртекасси» автоçул çинче тулли мар явăплăхлă «СМУ» пĕрлешӳ тимлесех ĕçлет. Ку çулăн Уйкас Янасал ял тăрăхĕн территорийĕнчи 1587 метр тĕршшĕ сыпăкĕ çинче юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Çак ĕçе «Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă çул-йĕр» федераци программин шайĕнче пурнăçлаççĕ.

Каласа хăвармалла, ку программăпа иккĕмĕш çул ĕнтĕ Муркаш районĕнчи çулсене сараççĕ, юсаççĕ. Кăçал та пурĕ 24 км яхăн çулсем юсамалла, çакна валли 109 миллион ытла тенкĕ уйăрма палăртнă.

«Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă çул-йĕр» федераци программипе юсакан çулсен пахалăхне «Независимая экспертиза» пĕрлешӳ тĕрĕслесе тăрать. Çавна май унăн представителĕсем «СМУ» пĕрлешӳ ĕçлекен объекта тухса тĕрĕслев ирттерчĕç. Малашне те юсав ĕçĕн кашни тапхăрнех тĕрĕслесе тăрĕç.

«СМУ» пĕрлешĕвĕн çул-йĕр ĕçченĕсем асăннă çул сыпăкĕ çинче иртнĕ эрнере путăксене сапланă, халĕ вара вĕсене тӳрлетсе тухаççĕ те асфальтăн пĕрремĕш сийне хураççĕ. Хыççăн, технологипе килĕшӳллĕн, асфальтăн тепĕр сийне те сармалла.

«СМУ» пĕрлешӳ çул юсассине графикран иртсе пурнăçлать. Контрактра палăртнă тăрăх, ку çула июнĕн 1-мĕшĕнче юсама тытăнмалла пулнă. Пĕрлешӳ представителĕсем каланă тăрăх, техника та, çынсем те кунта каçхи сакăр сехетченех тимлеççĕ. Апла ĕçе вăраха тăсса ямĕç.

Ку объектра ĕçе вĕçлесен «СМУ» пĕрлешӳ Муркаш районĕнчи «Муркаш – Хорнуй – Платкасси» çула юсама тытăнĕ.

Л. ПАВЛОВА.

Июнĕн 1-мĕшĕ – Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун

Ачана тимлĕхпе юрату кирлĕ

Ĕнер пирĕн районти шкулсем çумĕнче ачасен сывлăхне çирĕплетмелли тата тĕрлĕ профильпе ĕçлекен лагерьсем уçăлчĕç. Çакăнпа пĕрлех хула тулашĕнчи лагерьсенче те çуллахи тапхăр пуçланчĕ. Çак кун Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кунпа пĕр килни – яланах хăйне май ырă паллă.

Çуллахи вăхăтра кăçал Муркаш районĕнчи 1940 ачана тĕрлĕ лагере явăçтарĕç. Хула тулашĕнчи лагерьсенче 88 ача хăйĕн сывлăхне çирĕплетме тата пултарулăхне аталантарма пултарĕ. Каламалла, йывăр лару-тăрури çемьесенче ӳсекен 60 ачана путевкăпа тивĕçтернĕ: 19 путевка – тӳлевсĕр, 41 путевка – хакăн 5 процентне тӳленипе. Кунсăр пуçне халăха ĕçпе тивĕçтерекен Муркашри центр çамрăксене вăхăтлăх ĕçе явăçтарассине йĕркелет.

Çапла вара шкул ӳсĕмĕнчи чылай ачан çуллахи канăвне йĕркелессипе педагогсемпе воспитательсем ытларах июнь уйăхĕнче тимлĕç. Ытти вăхăтра та ачасене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессине йĕркелемелле. Çакна сывлăха çирĕплетмелли кампани вăхăтĕнче хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессипе иртнĕ районти канашлура та палăртнă.

Чăнах та, ачасем хăйсене хӳтлĕхре туйччăр тесен вĕсене аслисен тимлĕхĕ, ашшĕ-амăшĕпе çывăх çыннисен юратăвĕ кирлĕ. Кунпа пĕрлех ачан хăйĕн те яланах асăхнуллă та тимлĕ пулмалла: пушар хăрушсăрлăхĕн, çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн йĕркисене пăхăнмалла, шыв çинчи хăрушсăрлăх пирки те лайăх пĕлмелле, информаци хăрушсăрлăхĕ пирки те манмалла мар. Обществăлла вырăнта хăйне хăрушсăрлăхра туяс тесен харпăр хăйне мĕнле тытмаллине те чухламалла.

Çак пĕлĕве ача пĕтĕмпех ăса хывма пултарать, анчах та тăтăш асăрхаттарсан, аса илтерсен кăна. Ашшĕ-амăшĕ ĕçре чухне ача килтен ăçта кайма шухăшланине шăнкăравласа пĕлтернине те çемьере йĕрке вырăнне йышăнмалла – пурне те лăпкăрах пулĕ. Шыв хĕрне, вăрмана аслисемĕр каймалла маррине çăлавçăсем час-часах калаççĕ. Çавăнпа та ашшĕ-амăшĕ те кун пирки тăтăшах аса илтерсе тăни ытлашши мар. Унсăрăн инкек патне çитсе тухма та пулать.

Следстви комитечĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви уйрăмĕнчен палăртнă тăрăх, инкексем шăпах ачасем шыв хĕрне е шыва кĕме аслисемсĕр кайнипе, ачасем чӳречерен тухса ӳкнипе пулнă. Пĕчĕк ачасене килте аслисемсĕр хăварнăран пушар тухнипе пулнă инкексем те сахал мар. Çавăнпа та хăрушсăрлăх йĕркине кашни утăмрах пăхăнма вĕрентмелле, аслисен хăйсен те пăхăнмалла.

Чăвашстат даннăйĕсене тишкернĕ май, пирĕн республикăра пĕлтĕрхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурĕ 257,4 пин ача пурăнни паллă. Вăл шутра 116 пинĕ – 0–6 çултисем, 107 пин – 7–14 çултисем, 34,4 пин – 15–17 çултисем пулнă.

2018 çулти январь – март уйăхĕсенчи статистика пĕтĕмлетĕвĕ çак тапхăрта Чăваш Республикинче 3,2 пин ача çуралнине кăтартать. Вĕсенчен 1100 ача çемьере пĕрремĕш пепке пулнă, 2100 ача – иккĕмĕш е хыççăнхи.

Ашшĕ-амăшĕ хăйĕн ачи тĕрĕс-тĕкел те сывлăхлă ӳстĕр тесе хăйĕнчен мĕн килнине пĕтĕмпех тăвать. Апла пулин те ача ашшĕ-амăшĕпе кирек мĕнле сăлтавпа та хăрамасăрах, ăна ăнланассине пĕлсе калаçу пуçарма пултараймасть пулсан, ку пысăк ĕç те харама каять. Çавăнпа та аслисен çемьери лăпкăлăха, тачă çыхăнăва упракан ырă лару-тăру йĕркелеме тăрăшмалла.

Н. НИКОЛАЕВА.

Патшалăх пулăшăвĕ

Çамрăк çемьесем – район тĕрекĕ

Раççей Федерацийĕнче те, Чăваш Республикипе хамăр районта та çамрăк çемьесемшĕн тăрăшасси çулсерен вăй илсе пырать. Çакна çирĕплетекен тĕслĕхе шыраса инçе кайма та кирлĕ мар. Иртнĕ юнкун, çу уйăхĕн 30-мĕшĕнче, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев районта пурăнакан 15 çамрăк çемьене тата 2 çамрăк специалиста пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма патшалăх сертификачĕ пачĕ.

– Сертификатсем илнипе пĕрле сирĕн ĕмĕтĕрсем пурнăçланмалли çул уçăлтăр. Аçта пурăнмалли ыйтăва хăвăра килĕшӳллĕ татса парсан, эсир район экономикишĕн çаврăнăçуллăрах та пуçаруллăрах ĕçлессе шанатăп. Ĕçлекене вара патшалăх малашне те пулăшусăр хăвармĕ, – терĕ çамрăк çемьесене вĕсен çутă ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕрсе пынишĕн савăнса район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев.

Салам сăмахĕсемпе пĕрлех Ростислав Николаевич пухăннисене ял çыннин пурнăçне лайăхлатассипе район администрацийĕ епле ĕçленипе паллаштарчĕ. Пĕрлехи тăрăшулăхпа иртнĕ çул 39 çемьен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕ сене лайăхлатма 30 миллион тенкĕ ытла расхутлама пултарнă. Кăçал çак тĕллеве пурнăçлама пĕтĕмпе 23,5 миллион тенкĕ пăхнă. Вĕсенчен 15 миллион тенки ытла 23 çамрăк çемьен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма кайĕ. Патшалăх пулăшăвĕпе çамрăк çемьесем пурăнмалли хваттерсем туяннă е уйрăм çурт-йĕр тунă çĕрте усă курма пултараççĕ.

Çак кунах Ростислав Николаевич аллинчен 2 çамрăк специалист «Чăваш Республикинчи апат-çимĕçпе чĕр тавар, ял хуçалăх продукцийĕн рынокне йĕркелесси тата ял хуçалăхне аталантарасси» патшалăх программин «Чăваш Республикинчи ял территорийĕсен тăнăç аталанăвĕ» хушма программипе пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмалли сертификата пурĕ 1,3 миллион тенкĕлĕх илчĕ.

Патшалăх пулăшăвне тивĕçнĕ çамрăк çемьесемпе çамрăк специалистсен савăнăçне ăнланма пулать.

– Паян пирĕн çемье пурнăçĕнче – чи телейлĕ кун. Тăван районта çамрăк çемьесемшĕн çапла тăрăшнине курма питĕ кăмăллă. Раççей Федерацийĕн Президентне В. Путина, Чăваш Республикин Пуçлăхне М. Игнатьева, район администрацийĕн пуçлăхне Р. Тимофеева пысăк тав. Ку пулăшу – пирĕн çемьешĕн пысăк тĕкĕ, – терĕç савăнăçне пытармасăр Юнкă ял тăрăхĕнчен килнĕ Маринăпа Дмитрий Владимировсем.

Л. ПАВЛОВА.
Автор сăн ўкерчĕкĕ.

Ыйту – хурав

Хăйăр кăларма лицензи кирлĕ

Якаткасси ялĕнчен район хаçачĕн редакцине черетлĕ ыйту пулчĕ. ***«Муркаш çулне тунă чухне пирĕн ял çумĕнче хăйăр карьерне уçса хăйăр турттарчĕç. Вăл карьер шутланса тăмасть, ăна харпăр хăй ирĕкĕпе уçрĕç. Ял тăрăх вара пысăк тиев турттаракан КамАЗ, МАЗ маркăллă автомашинăсем хăйăр турттарнă пирки урам хушши лапаланса кайрĕ. Çырми виçĕ хутлă çурт çўллĕш пулса юлчĕ. Выльăх-чĕрлĕхпе вара унта пыма хăрамалла. Хăйăра карьертан харпăр хăй ирĕкĕпе кăларма юрать-и?»***

Асăннă ыйту çине район прокурорĕн çумĕ Юрий Семенов хуравлать:

– Ирĕк илмесĕр карьертан хăйăр турттарнă факт пирки маларах та ыйтакан пулнăччĕ. Хамăр тăрăхри çырмасенчен харпăр хăй тĕллĕн хăйăр турттарни вăл экологие упрас тата эрозие хирĕç кĕрешес ыйтусене хирĕçлет. Асăннă çырăва çыракан та тавралăх хăтлăхĕшĕн пăшăрханать: урам хушши лапаланса кайнă, выльăх-чĕрлĕхе унта çўретме хăрамалла.

Ку ыйтура çыннăн чунлăхĕ кирлĕ. Хăйăр чавса кăларни çырма-çатрана тарăнлатса ярать, çавăн пекех уй-хирти çĕрĕн пулăх пайĕ те юхса каять. Çаксем йăлтах – пурнăçри хирĕçле пулăмсем. Çĕре шыв-шур çурса каясран йывăç-тĕм лартмалли пирки кашниех лайăх пĕлет. Апла пулсан хамăр тавралăхшăн хамăр ответлă.

Раççей Федерацийĕн «О недрах» саккунĕн 1.2 статйипе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн территорийĕнче, вăл шутра çĕр айĕнчи пурлăх, энергетика тата ытти ресурс патшалăх харпăрлăхĕ шутланать, çавна май унти ырлăх-пурлăх – патшалăх хўтлĕхĕнче.

Çĕр айĕнчи пурлăхпа суту-илў тума, парнелеме, ăна салук шутне кĕртме ирĕк çук, çавăн пекех çак ырлăх-пурлăх эткерлĕхре те пулма пултараймасть, пĕринчен теприне куçаймасть.

Çĕр айĕнчи пурлăхпа усă курас текенсен патшалăхăн ятарлă ирĕкне, лицензине, илмелли пирки «О недрах» саккунăн 11 статйинче çырса кăтартнă. Ку вăл ытларах чухне предприятисемпе организацисене пырса тивет.

Çапла вара çĕр айĕнчи ырлăх-пурлăхпа усă курассинчи саккун тăрăх, хăйăр, хăйăрпа гравий хутăшне, строительство валли е палăк тума гранит кăларма, ытти ĕç пурнăçлама лицензи кирлĕ.

Ирĕк илмесĕр харпăр хăй тĕллĕн патшалăх хўтлĕхĕнчи пурлăхпа хуçаланакана административлă е уголовлă яваплăх кĕтет. РФ КоАПĕн 7.3 статйин 1 пайĕнче çĕр айĕнчи ырлăх-пурлăхпа лицензисĕр усă куракана административлă яваплăх кĕтни пирки каланă. Уйрăм çынсене – 3 пинрен пуçласа 5 пин тенкĕ таран, должноçри ĕçчене – 30 пин тенкĕрен пуçласа 50 пин тенкĕ таран, предприятипе организацие 800 пин тенкĕрен пуçласа 1 миллион тенкĕ таран штраф тўлеттерме пултараççĕ.

Уголовлă ответлăх пирки РФ УК 158 статьяра (патшалăх харпăрлăхĕнчи пурлăха вăрлани), 171 статьяра (çĕр айĕнчи пурлăха кăларассипе предприниматель ĕçне пурнăçласа тупăш илни) тĕплĕн ăнлантарнă.

Енчен те экологие хирĕç ĕç тунă фактсем пулсан тивĕçлĕ органсене вăхăтра пĕлтермелле, чи малтанах ял тăрăхне шăнкăравламалла. Экологие хирĕçле ĕçсемпе Атăл çи регионсем хушшинчи çут çанталăк сыхлавĕн прокуратури ĕçлет. Вĕсем вырăна тухса тĕрĕслев ирттерсе йĕркене пăсакансене явап тыттараççĕ. Нумаях пулмасть асăннă прокуратурăн прокурорĕ Ирина Бородина район администрацийĕнче çынсене экологи тĕлĕшĕнчи ыйтусемпе йышăнчĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА хатĕрленĕ.

Пĕр пек йĕрке пулмалла мар-ши?

«Иртнĕ кунсенче Лантăш ялĕ патĕнчи транспорт чарăнăвĕнче маршрут автобусне кĕтме тиврĕ. Кунта тирпейлĕ, çўп-çап пăрахмалли урна та пĕчĕк мар. Сумка лартма е ларса канма сакĕ-сем те меллĕ. Питĕ йĕркеллĕ.

Çав кунах Отарккăри транспорт чарăнăвĕнче пачах та хирĕçле ўкерчĕк курма тиврĕ: кунта çынна ларса канма сак та çук, çўп-çапне ăçта пăрахмалли те паллă мар. Çавăнпах ĕнтĕ салфетка, канфет хучĕ, пластик кĕленче чарăну тавра выртать.

Пĕр районта пурăнатпăр пулсан, мĕншĕн пур çĕрте те пĕр пек йĕрке пулмалла мар? Ку камран килет-ши?»

Хăйне «район тăрăх çул çўреве тухнă хĕрарăм» тесе палăртма ыйтнăскер.

Чарăну павильонĕсем таврашĕнче тирпейлĕ пулни унта транспорт кĕтекен çыннăн кăмăлне паллах пăсмасть. Тĕрлĕ кĕленче, салфетка тата ытти те выртать пулсан, ку вырăнтан аяккарах тăма тăрăшатăн. Тепĕр тесен остановкăра, вăл обществăлла вырăн пулнăран, эрех-сăра кĕленчи выртмалла мар. Кунта эрех-сăра ĕçме те, пирус туртма та юрамасть – административлă йĕркене пăсни пулать. Пирĕн çынсем ку шая «ўссе» çитесси паян-ыранах пулсан тем пекехчĕ.

Чарăну павильонĕнче урна çуккине курса совеçлĕ çын унта чăнах та нимĕнле салфетка та пăрахса хăвармасть. Мĕншĕн тесен ăна сумкăна тирпейлĕн пуçтарса чиксе урна пур вырăна пăрахма пулать. Анчах ку мелпе тирпейлĕхе тытса тăма çук – урна кирлех.

– Районта тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ çулсене тĕрлĕ подрядчик пăхса тăрать. Çапла Лантăш ялĕ çывăхĕнчи тата Отарккă ялĕнчи чарăну павильонĕсене тирпейлĕ тытса тăрассипе те тĕрлĕ организаци яваплă.

Лантăш ялĕ çывăхĕпе иртекен «Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск» çула «Дортех» пĕрлешӳ пăхса тăрать.

Отарккă ялĕ çумĕпе иртсе каякан çул район пĕлтерĕшлĕ çул шутланса тăрать. Çак çула пăхса тата тытса тăма район администрацийĕ «Стройка – 21» организацине килĕшӳ тунă. Чарăну павильонĕ патĕнче те çак организацинех урна лартса памалла, ăна тасатса тăмалла.

Çынна ларса канма сак та çук, тенĕ хĕрарăм. Ку остановкăра та, ыттисенчи пекех, малтанласа сакĕ пулнă. Ăна çĕмĕрнĕ пулсан, вăл унти çынсене чăрмантарнă пулĕ. Ялсенчи, ялсем таврашĕнчи тирпейлĕх чи малтанах çав вырăнта пурăнакансенчен килет тесе каласшăн эпĕ. Апла пулин те урна лартас ыйтăва эпир подрядчик патне çитеретпĕр, – **пĕлтерчĕ район администрацийĕн капиталлă строительство тата общество инфраструктурине аталантарассин пай пуçлăхĕ Алексей Матросов.**

Сăмах май, Алексей Николаевич районта тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ çулсем çинче чарăну павильонĕсем тăвассипе ĕçе пуçăннине те каларĕ. Районта çĕнĕ 16 чарăну павильонĕ тума строительство организацине суйласа илессипе аукцион пирки пĕлтернĕ. Çапла вара çĕнĕ чарăну павильонĕсем пулĕç.

Июньте подрядчиксем ытти чарăну павильонĕсене юсассипе, сăрлассипе ĕçлĕç.

Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.

Ыйту – хурав

Ртуть сиенлĕ

«Килте кĕлетке температурине виçмелли градусник çĕре ўксе ванса кайрĕ. Шалти шĕвек урайĕнче пайăн-пайăн пайланса кайрĕ. Нимĕн тума та пĕлместĕп, çитменнине тата килте никам та çук. Мĕн тумалла-ши?»

Гигиенăпа эпидемиологи центрĕн районти пĕтĕмĕшле гигиена врачĕн пулăшаканĕ В. Матвеев хуравлать:

– Кун пек лару-тăру пулсан, тўрех пăлханса ўкме кирлĕ мар. Ку çыннăн сывлăхĕшĕн хăрушă япала. Ртуть 18 градусра пăсланма пуçлать, пăсĕ сывлав системине лекет. Енчен те çĕмĕрĕлнĕ градусникри ртуть пўлĕмре чылай вăхăт пулсан, сывлăха ытларах та сиен кўрет.

Çак пĕчĕк-пĕчĕк пайсем питĕ «çивĕч», унталла-кунталла куснипе урай хăми хушăкне е ытти çĕре кĕрсе пытанма пултараççĕ. Кайран вĕсене асăрхама питех те йывăр. Шăпах çаксем, кусса кайса пытаннисем, малашне пысăк хăрушлăх кăларса тăратма пултараççĕ.

Чылай хушă унăн пăсĕ ăш-чике кĕрсен, пневмони аталанма, чĕрепе юн тымарĕсен системине, пĕверпе пўрене хавшатма тата ытти органа сиенлетме пултарать. Ачасемпе çие юлнă хĕрарăмсемшĕн ртуть ытларах та хăрушă.

Хăрушлăха вăхăтра сирес пулсан, ртуть юхнă пўлĕмрен чи малтанах çынсене тухма ыйтмалла та алăка çирĕппĕн хупса хумалла. Инкек вырăнне сăтăрма супăньпе сода хутăшĕллĕ тата кали перманганачĕн шĕвекне хатĕрлемелле. Çавăн пекех 3 литрлă кантăк савăта сивĕ шыв ямалла. Икĕ хут кирлĕ, шприц, вата, спица, скотч пулмалла.

Резина тапочки, перчетке тăхăнмалла, пите марля çыххипе картламалла. Градусник ванчăкне асăрханса пуçтармалла та кантăк савăта ямалла. Ртуте хутпа пĕр çаврăма пухмалла та ватăпа тĕксе хут çине илмелле, кантăк савăта ямалла. Куçа курăннисене пуçтарнă хыççăн, курăнманнисене пухма çĕмĕрĕлнĕ вырăна скотч çыпăçтармалла, хушăксенчи ртуте шприцпа ĕмтермелле. Çакăнта усă курнă мĕнпур хатĕре хутаça хумалла та çирĕппĕн çыхмалла, ăçта ăсатмаллине пирĕн е МЧС специалисчĕсем ăнлантараççĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА хатĕрленĕ.

«Канав ишĕлет»

«Муркашран тухсан кирпĕч завочĕ еннелле каймалли кĕпертен пуçласа çав завод таран шыв юхмалли канав япăхсах, ишĕлсех пырать. Çак канава пăхса тăракан пур-ши? Канава йĕркене кĕртессине камăн пурнăçламалла?»

Çакăн пек ыйтусемпе редакцине Муркашра пурăнакан В. Мясников çитрĕ.

Çул айккипе шыв юхмалли канав ванса пыни шыв кунти çĕре çырмана юхтарма тытăнас хăрушлăх пур. Çавăнпа та ĕçе вăхăтра пурнăçланине нимĕн те çитмет.

Район администрацийĕн **капиталлă строительство тата общество инфраструктурине аталантарассин пай пуçлăхĕ Алексей Матросов**, ыйтусене хуравланă май, çакна палăртса каларĕ:

– Шыв юхмалли канав «Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск» автоçул хĕррипе вырнаçнă. Ку çул республика пĕлтерĕшлĕ çул шутланать. Каласа хăвармалла, республика пĕлтерĕшлĕ çулсем пирĕн район территорийĕнче пурĕ 94,437 км йышăнаççĕ. Çак шайри çулсене пăхса тăрассишĕн Чăваш Республикин Транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министерствин «Чувашупрдор» учреждени ответлă пулса тăрать.

Çавна май маларах асăннă çула тата, йĕркепе килĕшӳллĕн, çул айккисене те кирлĕ пек пăхса тăрассишĕн шăпах «Чувашупрдор» ответлă. Учреждени çула пăхса тăма подрядчика палăртнă. Вăл – «Дортех» пĕрлешӳ.

Канав ванса пынине вырăна тухса тĕрĕслетпĕр, çитменлĕхсене конкретлă палăртнă хыççăн вĕсене пĕтерме ыйтса ку ыйтупа «Чувашупрдор» учреждение официаллă çырупа тухатпăр.

Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.

Православи кĕтесĕ

Питрав типпи

Православи тĕнне пăхăнса пурăнакансем Çимĕк хыççăн Питрав кунĕччен типĕ тытаççĕ. Типĕ мĕн чул тăсăласси Мăнкун хăçан пулнинчен килет. Çапла вара чи вăрăма тăсăлакан Питрав типпи ултă эрне чухлĕ пулма пултарать, чи кĕски – сакăр кун. Кăçал вăл июнĕн 4-мĕшĕнче пуçланать.

Çак типпе тытнине Христоса ĕненекенсем Петрпа Павел апостолсем Святой Сывлăшран пил илнĕ хыççăн типĕ тытнине тата кĕлĕ вуланине тĕслĕх вырăнне илсе пурнăçланă. Хуларан хулана, çĕршывран çĕршыва куçса Петрпа Павел апостолсем Христос вĕрентĕвне сарса çӳренĕ. Çак ырă ĕçпе вĕсем ытти апостолсенчен ытларах палăрса тăнă.

Матфей çырнă Евангелире типĕ тытасси пирки акă мĕнле каланă: «Типĕ тытнă чухне те ултавçăсем пек хуйхăллă ан пулăр; вĕсем хăйсем типĕ тытнине çынсене кăтартасшăн сăнĕсене салхуллатаççĕ... Типĕ тытнă чухне эсĕ пуçна çу сĕр, питне çу; çынсен умĕнче типĕ тытакан пек ан курăн, курăнман Açу анчах куртăр ăна; вара вăрттăн тунине куракан Açу сана кĕретех тавăрса парĕ».

Çакă Турра ĕненекен çыннăн кĕлтунипе тата типĕ тытнипе хăйĕнчен усалсене хăваламаллине пĕлтерет.

Пурнăçран

Кунта ирех юрлаççĕ

Муркаш варринче, казначейство çурчĕ çумĕнчи сотовăй çыхăну операторĕсен суту-илӳ киоскĕсемпе юнашар, ларса канмалли питĕ меллĕ вырăн пур: хыçлă саксем те лартса панă, хĕвелтен пытанма витĕ те тунă. Анчах çӳп-çап е каяш пăрахма нимĕнле урна та çук. Çавăнпах пулĕ унта ларса эрех-сăра кĕленчи е фанфурик пушатнă хыççăн савăтсене çурăм хыçнелле ывăтаççĕ. Пуçтарса ĕлкĕр кăна. Вĕсем хыççăн вара, карта тепĕр енче райхаçат редакцийĕн картишĕ пулнăран, райхаçат редакцийĕн техслужащийĕн тирпейлесе тăма тивет. Ку таранччен пуçтарса пынă кĕленчесене каялла сак çине купаласа тултарнă пулсан, халĕ унта ларма та вырăн пулмĕччĕ.

Çак çĕр лаптăкĕн хуçи пур-ши? Ку ыйтăва хуравлама Муркаш район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхне О. Тимофеевăна ыйтрăм. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, çĕр лаптăкне килĕшӳ çырса уйрăм çынна арендăна панă. Апла пулсан вăл çĕр лаптăкĕ çинчи тирпейлĕхшĕн те ответлă пулмалла. Анчах пĕлтĕр те, кăçал та кунта – пĕр ӳкерчĕкех. Ольга Тимофеева палăртнă тăрăх, аренда килĕшĕвĕн срокĕ кĕçех вĕçленмелле-мĕн.

Шăпах çак вырăнта ларакансем темиçе ир ĕнтĕ Муркаша ĕçе килекенсене юрласах кĕтсе илчĕç – куллен ĕçе васкакан çынран, çак вăхăтра ака-сухара тар тăкакансенчен кулнăнах туйăнчĕ.

Обществăлла йĕркене пăсакансене полицейскисем те явап тыттараççĕ, анчах вĕсем кăна та часах манса каяççĕ пулас. Сăмах май, шалти ĕçсен пайĕнче регистрациленĕ преступленисене тишкерсен те, вĕсенчен ытларахăшне эрех ĕçнĕ хыççăн тунă.

Май уйăхĕнче акă вăй питти çын та сахал мар вилнĕ, пурăннă чухне вĕсенчен нумайăшĕ эрех ĕçнине палăртнă.

Тепĕр тесен, эрех кĕленчисем çинчи ятсем те илĕртеççĕ пулĕ çав: «Хунямаран» пуçласа «Юлташ» таранах пур. Тавар туянакана темĕнле майпа та илĕртме тăрăшаççĕ. Анчах йăвашран кулать «Юлташ»...

Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.

Профилактика кунĕнчен

Йĕркелĕх кашни çынран тимлĕх ыйтать

Чуманкасси ял тăрăхĕнче профилактика кунĕнчи ĕçе вырăнти профилактика канашĕн анлă ларăвĕнче тишкерчĕç.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Белов пĕлтернĕ тăрăх, канашăн ларăвĕсенче кăçал вырăнти йĕркелĕхе тытса тăрассипе çыхăннă чылай ыйтăва тишкерсе малаллахи ĕçсене палăртнă. Çавна май ялти пухусенче çынсен тата кил-çуртăн хăрушсăрлăхĕ пирки малашне те аса илтерсех тăрĕç.

Ку тăрăхри йывăр лару-тăрулла ултă çемьене (учета виççĕшне илнĕ) çул çитменнисемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен районти комисси контрольлесе тăрать. Ял тăрăхĕн профилактика канашĕ вара ку çемьесемпе пĕрлех маларах контрольте пулнă çемьесене те куçран вĕçертмест. Ларăва чĕннĕ пĕр ашшĕне итлерĕç. Ăна малашне пурнăçа лайăх енĕпе йĕркелесе яма сĕнчĕç, çавна май кирлĕ канашсем те пачĕç.

Ларăва профилактика ĕçне пурнăçлакан пур субъект та хутшăнчĕ. Вĕсемпе уçă каласу иртнĕ хыççăн район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ача сачĕ, шкул, фельдшерпа акушер пункчĕ – пурте асăрхаттару ĕçне лайăх шайра пурнăçланине палăртрĕ. Çапах та вырăнти асăрхаттару ĕçĕн пĕтĕмĕшле ӳкерчĕкĕ пĕр çĕрте – ял тăрăхĕн администрацийĕнче – курăнмаллине палăртса каларĕ.

Чуманкасси шкул администрацийĕ ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле килĕшсе ашшĕ-амăшĕсен патрульне йĕркеленĕ. Çапла вара, çирĕплетнĕ график тăрăх, канмалли кунсенче класс ертӳçисем тата ашшĕ-амăшĕсем ку таврари обществăлла вырăнсенче пулаççĕ. Йĕркене сыхланипе пĕрлех ку рейдсенчи хутшăну ашшĕ-амăшне ачасен шкулти пурнăçĕ пирки тĕплĕнрех пĕлсе тăма та май парать.

Шкула полицейскисем, çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем, медицина ĕçченĕсем тăтăшах килеççĕ. Ачасемпе тĕрлĕ каласу ирттереççĕ.

Вырăнти криминоген лару-тăрăвĕ пирки каласа панă май, ку территорире участковăй ĕçне вăхăтлăх пурнăçлакан Алексей Оньков условлă майпа айăпланисене, обязательнăй йĕркепе обществăлла ĕçе явăçтарнисене тата ытти категорие кĕрекенсене контрольте тытнине палăртрĕ. Кунпа пĕрлех пĕччен пурăнакан арçынсем патĕнче эрех-сăра ĕçекенсем пухăнни ялсенче хăрушлăх кăларса тăратни пирки те каларĕ. Нумай пулмасть Отарккăри пĕр çын килтен алкоголь сутнине тупса палăртнă. Куншăн вара явапĕ çирĕп.

Çуллахи вăхăтра ачасемпе çамрăксене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерес ыйту питĕ çивĕч. Ачасем пушă вăхăта ирĕклĕ ирттереççĕ. Ялсене хула ачисем те килеççĕ. Çавăнпа та шыв çинчи хăрушсăрлăх, пушар хăрушсăрлăхĕ пирки ачасене те, аслисене те тăтăшах асăрхаттармаллине çирĕппĕн палăртрĕç. Ялсенче çуллахи вăхăтра палламан шанчăксăр çынсем çӳренине курсан та участковăя пĕлтерни ытлашши пулмĕ. Вырăнти йĕркелĕх кашни çынран тимлĕх ыйтать.

Н. НИКОЛАЕВА.

Оринин халăх театрне йĕркеленĕренпе – 100 çул

Судья та пулнă, нимĕçле те юрланă

Çĕньял Оринин ялĕнче пурăнакан Валериан Пушкин хальхи вăхăтра килтен тухсах çӳреймест, çавăнпа та Орининти Культура çурчĕн ертӳçипе Венера Васильевăпа ун патне киле çитме васкарăмăр: тахçантанпах тата чылай çул Оринин халăх театрĕнче вылянăскерпе хăйĕнпе курса каласма кăмăл пысăк пулчĕ.

– Оринин шкулĕнче вĕреннĕ чухне, пиллĕкмĕш класра пулĕ, эпĕ «Нарспи» поэмăри Сентти рольне вылянă. Пĕчĕк роль пулнă паллах, анчах «лаша» çине ларса темиçе хут сцена çине тухса кĕнĕ пулсан та, савăнаттăм. Иртнĕ ĕмĕрти 54 – 55-мĕш çулсем ун чухне. Режиссерĕ Петр Андреев пулнă вăл вăхăтра. Çавăнтанпа сцена çине тухма тытăннă та, – аса илĕве çапла пуçларĕ Валериан Викторович.

Сакăр класс пĕтернĕ хыççăн Валериан, пиччĕшĕпе тата инкĕшĕпе кăна пурăннăран, малалла ĕçе кӳлĕннĕ. Советскинче вĕреннĕ чух тата Казахстанра икĕ çул хĕсметре тăнă чух кăна сценăпа вăхăтлăх сывпуллашма тивнĕ унăн. Çапла театр хăйĕн 95 çулхи юбилейне паллă тунă чухне те сцена çинчех пулнă – халăха уяв кунĕнче «Авлансан каччă пулаймăн» спектакль сыпăкне кăтартнă çĕре хутшăннă.

– Миçе спектакльте вылянине ятарласа шутламан, шутне те пĕлместĕп. Шупашкарти сцена çинче выляма май килнĕшĕн те савăнатăп, театрпа Свердловск хулине çитсе килнĕшĕн те. Хама шанса панă пур роль те килĕшетчĕ. Ытларах комедийлă рольсене выляма тивнĕ. Пĕррехинче вара Михайлов режиссер вăхăтĕнче «Тройка» спектакльте судья рольне те калăплама тиврĕ – важнăй çын пултăм, – шӳтлесе каласма кăмăллани палăрать Валериан Викторович сăмахĕнче.



Пĕрре çапла тахăш мероприяти вăхăтĕнче театрта вылякансене саламласа Тав хучĕпе, дипломпа чыслана. Виктор Валерианович валли «награда» çитменрен, ăна тем сăлтавпа «сана заслуженный ят паратпăр» тесе шухăшламасăрах каласа янă пулĕ. Çак сăмахсем вара паянхи кун та унăн чĕрине ыраттарни палăрчĕ.

Кунсерен тăван хуçалăхра вăй хуракан трактористăн пурнăçĕ ахаль те çăмăл килмен: мăшăрĕ ирех çĕре кĕнĕ. Тăватă ачапа юлнă арçын вăхăт иртсен сцена çине тухнă – хуйхине унта пусарнă. Спектакльсем урăх тĕнчене куçма, йывăрлăх пирки вăхăтлăха манма пулăшнă. Паллах, артист пулма ятарласа вĕренмен çыннăн, трактористăн, çав сферăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ пуласси иккĕленӳллине вăл хăй те ăнланнă, анчах суранĕ юлнă.

Комедийлă рольсене вăл «урайĕнче вырталли рольсем» тет. Апла пулин те, вĕсене те тĕрĕс вылямалла, спектакльти тĕп шухăша кашни хусканупа, кашни сăмахпа куракан патне çитермелле.

– Кашни спектакльте «çĕнĕ çемье» пулнă. Пурте тăван пулса тăтăмăр ĕнтĕ. Чăнах та, коллективра яланах туслăх хуçаланнă. Пур режиссер та лайăх пулнă, – тесе таçта айккинелле тинкерсе пăхрĕ Валериан Викторович, аса илӳсен ытамне лекрĕ пулас.

Хуçалăхра ĕçленĕ чухне каçхи апата вăл килтен чиксе кайнă, трактора çĕр каçма парка лартнă хыççăнах репетицине васкана. Ачасемпе хунямăшĕ пулăшса пынă. Мăшăрĕ те хăй вăхăтĕнче театрта вылянă. Пĕр-пĕрне яланах ăнланса пурăннă вĕсем.

Пĕрре Кӳкеçре спектакль лартнă хыççăн Валериан Викторовича куракансем хупăрласа илнĕ те, эсир Шупашкарти артистах, камне пĕлместпĕр кăна, теме тытăннă. Киле те ярасшăн пулман. Вăл Оринин театрĕн артисчĕ пулнине ĕненмен. Çапла витĕмлĕ выляма пултарнă халăх театрĕн артисчĕ.

Тепĕр саманта та аса илчĕ вăл. Спектакль умĕн Петр Ванюшин режиссер ăна, «плясовать, так плясовать» темеллине, «танцевать, так танцевать» темелле маррине аса илтерет. Сцена çине тухсан вара артиста пурпĕр режиссер кайран каланă сăмахĕсем аса килеççĕ.

– Спектакль хыççăн вара пулчĕ «японский бог»... – режиссер тăтăш каланă сăмахсене вăл та астăвать.

«Ылтăн вăчăрана» сцена çинче лартма хатĕрленнĕ вăхăтра вара нимĕçле юрă та вĕренме тивнĕ. Ăна та Валериан Викторович пĕр такăнмасăрах юрласа пачĕ. Ĕçе чунтан тусан нимĕн те манăçмасть.

Н. НИКОЛАЕВА.

Истори страницисем

Очăкассинче икĕ шкул ĕçленĕ

Очăкасси шкулне уçнăранпа кăçал 180 çул çитрĕ. Чăваш патшалăх гуманитари институтĕнче Н. Никольский фондĕнче Очăкасси салинче шкул уçни çинчен каласа хăварни пур. Тĕне кĕнĕ чăваш ачисем валли 1838 çулхи пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче кунта училище йĕркелесе янă. 1840 çулхи пуш уйăхĕн 20-мĕшĕнче Патшалăх пурлăх министерстви тепĕр шкул уçать (вăл 1866 çул таран ĕçленĕ). Çапла вара ялта харăсах икĕ шкул пулнă.

1884 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнче Очăкассинче земство шкулĕ уçалнă. Шулта грамматика, арифметика, геометри, географи, истори, естествознани урокĕсем иртнĕ. Шкул ачисем Очăкасси чиркĕвне юрлама çӳренĕ. 1886 çулта салара чиркӳ прихут шкулĕ уçалать. 1900 çулта земство шкулĕ валли çĕнĕ çурт туса лартаççĕ. Çапла 1918 çулчченех Очăкассинче икĕ тытăмри шкул ĕçлет: патшалăх шкулĕ тата чиркӳ шкулĕ.

Малтанхи учительсем чиркӳ çыннисем пулнă: А. Паленин, П. Воскресенский. Ятарласа пĕлӳ илнĕ учительсем çаксем ĕçленĕ: П. Добромыслов, В. Алмазов, А. Алмазов, С. Троицкий.

1918 çултанпа Очăкассинче пĕр комплектлă пуçламăш шкул юлнă. Çулсем иртнĕçемĕн унăн статусĕ улшăнса пырать, шкул та урăх вырăна куçать: Очăкассинче, Торинкассинче, Шупуçĕнче ачасене йышăнать.

Пĕтĕмĕшле тĕп пĕлӳ паракан Очăкасси шкулĕ 2009 çулта «Очăкассинчи пуçламăш шкул – ача сачĕ» статуслă пулса юлать. 2016 çулта вара татах пĕчĕкленет, Çатракасси шкулĕн «Очăкассинчи шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕ» структура подразделенийĕ пулса юлчĕ.

Очăкасси шкулĕнче тĕрлĕ çулта чылай учитель вăй хунă, Г. Петров, А. Зайцев, С. Степанова, Ф .Матвеева, Н. Степанов директор ĕçне пурнăçласа пынă.

Очăкасси шкулĕн уявĕ кăçал та савăнăçлă лару-тăрура иртрĕ. Уява шкулта чылай çул тăрăшса ĕçленĕ вĕрентекенсем, çак шкултан вĕренсе тухнисем, ял çыннисем, хăнасем килсе çитрĕç. Педагогика ĕçĕн ветеранĕсем С. Степанова, А. Зайцев, Ф. Матвеева, М. Белова, З. Романова, Л. Герасимова, Н. Степанов шкул историйĕпе паллаштарчĕç. Пухăннисене район администрацийĕн вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ З. Дипломатова, çак шкулта вĕреннĕ Л. Морозов, Ю. Соловьев тата ыттисем те саламларĕç.

Уявра Очăкасси сачĕн ачисен, Çатракасси шкулĕнче вĕренекенсен чăваш юрри-ташшипе киленме май пулчĕ. Ятманти ял клубĕн пултарулăх ушкăнĕ тата В. Сергеев юрланă юрăсем те кăмăла кайрĕç.

Н. РОМАНОВА,
Çатракасси шкулĕн истори вĕрентекенĕ.

Усăллă сĕнӳ

Килти йывăç сĕтел-пукан е алăк шăйрăлсан тӳрех пăшăрханма кирлĕ мар. Шăйрăк тĕлне шăлса тасатнă хыççăн аçтăрхан мăйăрĕпе усă курса палăрмалла мар тума пулать. Çавна валли ăна тасатнă мăйăрпа сăтăрмалла та типиччен кĕтмелле. Сăтăрнă чух вăйлă пусас çук, мăйăр сĕткенĕ шăйрăка тулни çителĕклĕ.

Уксуспа олива çăвĕн хутăшĕпе те пĕчĕк йĕрсене «пĕтерме» пулать. 3 пай олива çăвне пĕр пай уксуспа хутăштарса шăйрăка сĕрмелле, типессе кĕтмелле.

Кил тата хушма хуçалăх

Пахчаçăн уйăх календарĕ

Урамра çулла хуçаланать

Таврара ăшă та тӳлек çу кунĕсем тăраççĕ. Сад-пахча шăпчăкпа куккук юррипе тулнă пулсан, улăх-çарана кĕçех утă шăрши çавăрса илĕ. Ешĕл курăк тата симĕс çулçă тумĕ тăхăннă тавралăхра ăшă çил вылять. Çĕртме уйăхĕн 16 – 23-мĕшĕсем – çулталăкри чи вăрăм кунсем. 23-мĕшĕнче хĕвел хĕл енне çаврăнать. Хаçат вулакан пахчаçăсене çĕртмери уйăх календарĕпе паллаштариччен халăх сăнавĕсене сĕнетпĕр: çĕртме уйăхĕн ăшă каçĕсем – çу каça улма-çырла ăнса пуласса; шыв çинче ирлесе тĕтре тăни уяр çанталăка пĕлтерет; хĕвел тухнă чух сывлăш пăчăлантарни – çумăра; час-час тĕтре тăни – кăмпа ăнса пуласса; сывлăм вăйлă ӳкни – пысăк тухăça; эрешменсем нумай тĕл пулсан – хитре çанталăка; кашкăр çырлин (жимолость) шăрши инçе сарăлни – çумăра; çĕртме уйăхĕ мĕнле – раштав çапла; шăрăхпа аптăратакан уйăхра хĕвел хĕл енне çаврăнать т. ыт. те.

Пĕвере е кӳлĕре шыва кĕресси – çак тапхăрти кунсен хăйне евĕр илемĕ. Ача-пăчашăн вăл питĕ кĕтнĕ вăхăт. Çĕртме уйăхĕн вĕçĕнче çĕр çырли пиçсе çитет. Ăна юратакансем кунтăк йăтса кӳршĕ вăрмана, улăх-çарана çул тытаççĕ.

Сад-пахчаран продукци ытларах илес тесен йăрансене тăтăш кăпкалатмалли тата пахча çимĕçе шăварсах тăмалли пирки манма юрамасть. Çак ĕçе ирпе е каçпа пурнăçламалла.

Уйăх календарĕ мал ĕмĕтлĕ пахчаçăна паян çапла сĕнӳçем парать:

Çĕртме уйăхĕн 2 – 3-мĕшĕсем. Улмуççи, груша, чие йывăççи тата сливăпа ирга лартма юрать. Анчах кун пирки пахчаçăн çиччĕ виçсе пăхмалла: шăварсах тăмасан типсе кайма пултараççĕ. Çĕр улми, йăрансем çине помидорпа пăрăç, хăярпа баклажан лартăр. Тымар çимĕçсем акăр. Çум çумлăр. Пӳлĕмри чечексене куçарса лартни ытлашши пулмасть.

Çĕртме уйăхĕн 4 – 5-мĕшĕсем. Пахча çимĕç культурисемпе тымар çимĕçе акни-лартни вырăнлă мар. Пахча çимĕçе ӳсĕм стимуляторĕпе пĕрĕхĕр. Улмуççисем тавра тата çырла тĕммисем патне çурма çĕрнĕ тислĕке сапаласа хурăр. Ӳсен-тăран сăтăрçисемпе кĕрешме, çум çумласа компост хатĕрлеме меллĕ вăхăт.

Çĕртме уйăхĕн 6 – 8-мĕшĕсем. Пахча çимĕç культурисене, çырла тĕммисене, хăмла çырлине, çимĕç йывăççисене шăварăр тата органика удобренийĕпе апатлантарăр. Çĕр улмине купаламалла. Кишĕр сайралатăр. Чечексем акăр-лартăр.

Çĕртме уйăхĕн 9 – 10-мĕшĕсем. Пахчаçă кĕтнĕ вăхăт. Ăшша юратакан культурăсене ӳсĕм стимуляторĕпе тата çимĕç тытăнма пулăшакан препаратпа пĕрĕхĕр. Помидор, пăрăç, баклажан, хăяр, мăн хăяр, физалис, купăста калчисене апатлантарăр. Улма-çырла йывăççисем çинчи сăтăрçăсемпе кĕрешнĕ вăхăтрах тымар çимĕçсене органикăллă удобренипе апатлантарăр.

Çĕртме уйăхĕн 11 – 12-мĕшĕсем. Çак кунсенче хĕл валли ӳстерме редис, çарăк, дайкон акса хăварма кая юлман-ха. Шăварăр, апатлантарăр, хуçалăх ĕçĕсем пурнăçлăр, тĕрлĕ им-çам пулăшнипе ӳсен-тăран чирчĕрĕпе, çум курăкĕпе ытларах кĕрешĕр.

Çĕртме уйăхĕн 13 – 14-мĕшĕсем. Пахча çимĕç культурисене сайралатмалла, çумран иртмелле. Çĕр çырлин кирлĕ мар хунавĕсене татмалла. Сăтăрçăсемпе ытларах кĕрешĕр. Тюльпанпа гиацинт суханĕсене кăларма юрать.

Çĕртме уйăхĕн 15 – 16-мĕшĕсем. Йывăçсемпе тĕмсен ытлашши тураттисене касма-иртме мелсĕр вăхăт. Удобрени хывма юрамасть. Эмел курăкĕсене акăр-лартăр е куçарса лартăр, газон курăкĕ акăр. Пӳлĕмри чечексене куçарса лартни япăх пулмасть. Çĕр улмине купаламалла. Ӳсен-тăрана сăтăрçăран тата чир-чĕртен им-çампа пĕрĕхсе хӳтĕлени вырăнлă. Çак вăхăтра пуçтарнă эмел курăкĕн усси пысăк. Уйрăмах чĕре чирĕсемпе кĕрешме пулăшакан курăксене пухмалла.

Çĕртме уйăхĕн 17 – 18-мĕшĕсем. Йăран çинчи ӳсен-тăрана шăварма тата апатлантарма юрăхсăр кунсем. Улма-çырла йывăççисен сăтăрçисемпе кĕрешме меллĕ вăхăт. Йăрансене кăпкалатни, вĕсене çум курăкĕнчен тасатни – ырана хăвармасăр пурнăçламалли ĕçсем. Çак кунсенче пуçтарнă çимĕçе çийĕнчех тирпейлеме тăрăшмалла.

Çĕртме уйăхĕн 19 – 20-мĕшĕсем. Удобрени хывма юрамасть. Çамрăк хунавсем лайăх çитĕнме пуçлаççĕ. Хуçалăх ĕçĕсем пурнăçлăр, тĕрлĕ им-çам пулăшнипе ӳсен-тăран чир-чĕрĕпе ытларах кĕрешĕр. Йăрансене çумран тасатнипе пĕрлех укроп, салат, нумай çул ӳсекен сухан, газон курăкĕ акма юрать. Чечек йăранĕсем йĕркелеме юрăхлă.

Çĕртме уйăхĕн 21 – 22-мĕшĕсем. Укроппа салата тепĕр хут акма та юрать. Нумай çул ӳсекен чечексем лайăх чĕрĕлеççĕ. Çĕре кăпкалатăр, нӳрĕк тытăр, компост хатĕрлĕр. Улма йывăççисемпе грушăсен тураттисем валли тĕкĕсем хатĕрлĕр. Уйăх календарĕпе килĕшӳллĕн сад-пахчари ӳсен-тăрана çителĕклĕ шăварăр тата апатлантарăр.

Пĕвере шыв тулли – ăнăçĕ пулла кайни.
